Муниципальное бюджетное общеобразовательное учреждение
«Ярабайкасинская средняя общеобразовательная школа»
Моргаушского района Чувашской Республики

УТВЕРЖДЕНА
решением педагогического совета
от 30.08.2017г. протокол № 1

**Рабочая программа учебного предмета**
***«Литературное чтение (на чувашском языке)»***
**в соответствии с ФГОС НОО**
**для 1-4 классов**
(предметная область «Родной язык и литературное чтение на родном языке»)

По программе: 1 класс – 33ч. (в неделю 1 ч.)
2-3 кл. - 102 ч. (в неделю по 3 ч.)
4 кл. - 68 ч. (в неделю 2 ч )

Составители:
учителя начальных классов
Воробьева Валерия Витальевна,
Григорьева Людмила Петровна,
Сорокина Лия Петровна,
Ядыкова Лидия Аркадьевна.

Ярабайкасы – 2017

**1.Предмета вĕрентнĕ май планлакан результатсем**

**Личностные результаты / Харкамлăх результачĕсем:**

-тăван халăхăн авалхи кун-çулĕпе, унăн тĕрлĕ тапхăрта палăрнă ывăл-хĕрĕпе, вĕсен пархатарлă ĕçĕсемпе паллашнă май харкам мĕнле халăхран тухнине ăша хуни, çакăнпа мăнаçланас туйăм çирĕпленни;

-тăван халăх культурин, халăх сăмахлăхĕн тытăмĕпе ăшлăхĕ мĕн тери пуян пулнине курма, несĕлĕмĕрсем, ăна ĕмĕрсем хушши упраса, туптаса паянхи куна çитерме пултарнине аса хывма пуçлани.

**Ĕç результачĕсем (харкамлах, предметсен перлехле, пайрамла результачесем)**

Харкам (личностные) результатсем ачасем хăйсен социумри вырăнне ăнланассипе, вĕсен тĕнче курăмне йĕркелессипе, тĕрлĕ халăх çыннисен культурине ăнланса йышăнма, тантăшĕсемпе тата аслисемпе тĕрлĕ лару-тăрура хутшăнма вĕрентессипе, вĕренӳ ĕçне сăлтавлама, вĕренекен яваплăхне ăнланса ăса хывма пулăшассипе çыхăнса тăраççĕ.

**Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсем (метапредметные)** содержанийĕнче палăртнă ăслай-хăнăхусем, компетенцисем пуçламăш шкулти ытти предметсене вĕрентнĕ май йĕркеленсе пымалла. Ку вăл ачасене вĕренӳ тĕллевĕпе задачисене ăса хывма, асра тытма, вĕсене татса пама май паракан çул-йĕре шырама вĕренсе пырасси; вĕренӳри тĕп ăнлавсене уçăмласси; вĕренӳ ĕçĕмĕсене (учебные действия) алла илесси. Уйрăм предметăн ятарлă результачĕсем пĕр-пĕр предмета вĕрентнĕ май йĕркеленекен ятарлă ăслай-хăнăхусем, компетенцисем кĕреççĕ.

**УВЁсене калăплас тĕлĕшĕнчен çапларах результатсем пулмалла:** Кăмăл-сипете аталантарасси:

- ачасене «тăван кĕтес», «Тăван çĕр-шыв» ăнлавсене уçăмлатма, харпăр хăй пурăнакан вырăна юратма, сыхлама хăнăхтарасси; тăван тавралăх, тăван кĕтес çинчен ытларах пĕлме хавхалантарасси; патриотлăхпа гражданлăх туйăмĕсене тарăнлатасси;
- харкам мĕнле халăхран тухнине ăса хывмалла, унăн çакăнпа мăнаçланас туйăм аталанмалла;
-аваллăха тĕпчени кирлине, халăх ĕмĕрсем хушши упранă мула хаклама вĕрентни ; халăхăн чи пысăк мулĕ – унăн чĕлхи, йăли – йĕрки уявĕсем пулнине вĕрентни;
- чăвашсем ĕçчен халăх пулнине, ачисене çамрăклах ĕçе хăнăхтарнине, аслисен сăмахне итлемеллине, тăвансене пулăшмаллине, ваттисене хисеплемеллине, хăйсене çын çинче тирпейлĕ тытмаллине палăртса хурасси;
- чĕлхе илемлĕхпе тасалăхне çирĕп тытса пыма хăнăхни;
- туссене пĕр-пĕрне пулăшмаллине, вылянă чух кăмăллă та ăшă пиллĕ пулмаллине асăрхаттарасси;
-чĕр чунсене юратма , вĕсем те çынсем пекех туйма пултарнине, хăйсене майлă ăсĕ пуррине палăртма вĕрентесси;
- йывăр вăхăтра пулăшма, ырри усаллине çĕнтерессе шанса пурăнма , кăмăллă, пĕр – пĕринпе килĕштерсе пурăнма вĕрентни;
- шӳте ăнланма, ачасене хăйсене шӳтлеме вĕрентсе пыни, - çирĕп те тӳрĕ кăмăллă пулма вĕрентни çыннăнне ыйтмасăр илмелле маррине ăнлантарни;
- туслăх туйăмĕсене упрама хăнăхтарасси; - çут çанталăк илемне асăрхама, унпа килленме хавхалантарасси;
- тăвăнлăах туйăмĕсене хаклама, çывăх çынсене юратма, вĕсене хисеплеме хавхалантарасси.

**Универсаллă вĕренӳ ĕç-хĕлĕсем:**

- ачасене кун йĕркине пăхăнма, учитель вуланине итлеме тата ăнланма, хăйсен туйăмĕсене сăнаса пама хăнăхтарасси;
-автор кăмăлне асăрхама, харпăр хăй кăмăл-туйăмне сăнама, палăртма хăнăхтарасси;
- ачасен илемлĕ, палăртуллă вуланине аталантарасси, вуласа тухни тăрăх ыйтусем лартасси тата вĕсем çине туллин хуравласси, хăйсен шухăшне уçăмлă палăртма вĕрентесси;
- группăсемпе мăшăрпа ĕçлеме хăнăхтарасси; ачасене хăйсен ĕçне хаклама вĕрентесси;
-тĕрлĕ жанăрлă хайлавсен хăйьевĕрлĕхне курма вĕсене уйăрса илме вĕрентесси;
- публицистика хайлвĕн тĕп паллисемпе тата уйрăмлăхĕсемпе паллаштарасси;
- харкам тĕллĕн шухăшлама , шухăшĕсене хăйсен сăмахĕсемпе палăртма пĕлни;

- ачасен вулав пахалăхĕсене ( тĕрĕслĕхне, палăртулăхне) аталантарасси;
- сăнарсен ĕçне хаклама пĕлесси; - вулавçă тавракурăмне калăпласси, харкам тĕллĕн вулас опыта тарăнлатасси;
- вăлтса каланине ăнланма вĕрентесси;
- диалога хутшăнас, палăртса вулас, хатĕр леннĕ хыççăн тата хатĕрленмесĕр каласа парас хăнăхусене тарăнлатасси;
- сасса тĕрĕс улăштарса вулас ăслайсене аталантарасси;
- презентации тăвас, хўтĕлес ăслая аталантарасси.

**Предмет ăшĕнчи пĕлў, хăнăху:**

- шкул йĕркисемпе паллаштарасси, вĕсене ăнланса, ăса хывса куллен пурнăçлаттарасси, çыхăнуллă калаçма вĕрентесси;
- илемлĕ хайлав, автор, хайлаври сăнарсем, хайлавра сăнланă ĕç йĕрки ăнлавсемпе паллаштарасси, вĕсене туйма, ăнланма вĕрентме пуçласси;
- -хайлавсен тĕрлĕ (илемлĕ, ăслăх) тĕсĕсене уйăрма, вĕсен уйрăмлăхĕсемпе хăйьевĕрлĕхне курма вĕрентсе пырасси;
-палăртуллă вулав ăслайĕсене аталантарасси;
-сăвăсенче туйăм мĕнле аталанса пынине сăнама хăнăхтарасси;
-хайлав чĕлхине туйма, сăнарлăх, палăртулăх мелĕсене ăнланма вĕрентсе пырасси;
-ăслăх хайлавĕсене йышăнма, ăнланма пĕлнине аталантарасси;
- илемлĕ хайлав уйрăмлăхĕсемпе хăйьевĕрлĕхне курма вĕрентсе пырасси, ăна ытти хайлавсенчен уйăрса илме вĕрентесси;
- калаври тĕп сăнарсене тупасси, калава пайсем çине уйăрасси;
- халăх сăмахлăхĕнчи тĕрлĕ сăвăсене танлаштарма, вĕсене кăмăл-туйăма палăртса, артикуляцие çирĕплетесси;
- юмахсен тĕсне(чĕр чун, йăла, асамлă юмах) палăртас, ĕнентерсе çирĕплетес пултарулăхне аталантарасси; юмах логикине, сюжетне сăнатарасси;
- халăх сăмахлăхĕнчи юмах-халапсен, сăвă-юрăсен пĕтĕмĕшле авторĕ халăх пулнине ăнлантарасси;
- хăвăрткаларăшсене такăнмасăр калама вĕрентни, артикуляцие çирĕплетни;
- халапсене илемлĕ – сасса кирлĕ пек улăштарса, харпăр хăй унта пулса курнă евĕр каласа пама хăнăхтарасси, халапа пурнăçпа çыхăнтарма вĕрентесси;
-«танлаштару», «эпитет» ăнлавсене ăнланасси: вĕсене уйăрма пĕлесси, калав. Сăнлав, уйлав ăнлавсене çирĕплетесси,калуллă тата сăнлавлă калавсене танлаштарса сăнасси;
- сăмах искусствин сăнарлăхĕпе илемне туйма вĕрентесси;
- прозăпа илемлĕ хайлавсем те сăвăласа çырни евĕр кĕвĕленме пултарнине асăрхасси;
- шўтлĕ хайлавсене туйăмлă йышăнма хăнăхтарасси, шўтлĕ хайлавсен хйнеъевĕрлĕхне сăнаттарасси;
- калаври ĕçсен аталанăвне; сăнаттарасси; чи çивĕч саманта палăртма вĕрентеси;
- текстра автор турремен каламан шухăша кăтартасси; тимлĕ вулав ăслайĕсене аталантарасси;
-информацин тĕрлĕ çăлкуçĕпе ĕçлеме хăнăхтарасси

**Йĕркелў ( регулятивлă):**

- ĕçе пурнăçлассипе унăн результачĕсен хăш – пĕр тапхăрĕсене харкам тĕллĕнех тĕрĕслесе тăма.

**Хутшăну (коммуникативлă) УВĔсем** тĕлĕшĕнчен ача вĕренсе çитет: юнашар ларакан ачапа пĕрле, пĕчĕк тата пысăкрах ушкăнсенче ĕçлеме: рольсене валеçсе илме, ушкăнри ĕçсен харкам пайне пурнăçлама, ăна ушкăнпа килĕштерме;харкам шух ăшнеăнлантарма; текстра вăл е ку сăнар хăтланăшĕн сăлтавне ăнлантаракан саманта тупма.

**Харкамлăх УВĔсем** тĕлĕшĕнчен ачан харкам мĕнле халăхран тухнине ăса хывмалла, унăн çакăнпа мăнаçланас туйăм аталанмалла;сăнарсен ĕçĕ – хĕлĕпе хăтланăшĕсене, кăмăл – туйăмне тишкернĕ май пĕтĕм этемлĕх сума сăвакан пахалăхсене ăнкармалла, ырăпа усала уяма вĕренмелле; илемлĕ хайлавсем вуланă – тишкернĕ май ачасен илемлĕхпе сăнарлăх туйăмĕ аталанмалла.

**Ăса хывмалли ăслайсемпе хăнăхусене çапларах палăртатпăр:**

**Вулав хăнăхăвĕсем:**

• тĕрĕс, ăнланса, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр (кăткăс тытăмлă сăмахсене – сыпăкласа) вуласси;
• вулав хăвăртлăхĕ минутра 50 сăмахран кая мар пулмалла ( ăшра вуланă чухне сăмах шучĕ 60 таран ӳсмелле);
• вуланă чух шухăша пăсмасăр, тĕрĕс чарăнусем туса сывлăш çавăрса ярасси, текстра паллакан тата палламан сăмахсене уйăрасси;
• хутсăр предложенин пур тĕсĕсене те тĕрĕс интонаципе вуласси; пĕлтерĕшне тата шухăшне кура текста хăвăрт е хуллен, сасса хăпартса е хăпартмасăр вуласси.

**Текстпа ĕçлесси:**

• тест ятне ăнлантарасси;
• учитель ертсе пынипе текста, ĕçсен йĕркине кура пĕлтерĕшлĕпайсене уйăрасси, вĕсене ят парасси ( план тăвасси);
• ансат план тăрăх хайлава асăмласа каласа парасси;
• харкам шухăша текстри тĕслĕхсемпе çирĕплетесси;
• учитель пулăшнипе хайлавăн тĕп шухăшне палăртасси;
• юмаха, калава, сăвва пĕр – пĕринчен уйăрса илесси;
• текста пахаласси;
• вуланă текст тăрăх сăмахлă ӳкерчĕксем тăвасси;

**Пуплеве аталантарасси:**

• текстра тĕл пулакан çĕнĕ сăмахсен пĕлтерĕшне уçăмлатасси;
• пулăма, сăнарсене сăнлама сăмахсен ретĕнчен вырăнлăраххисене, витĕмлĕреххисене суйласа илесси;
• сăмахăн тӳрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшĕсене палăртасси;
• чĕлхе туйăмне çивĕчлетесси;
• нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахсен пĕлтерĕшĕсене ăнкарма, сăмах пулăвне чухлама хăнăхасси; • сасăллă пуплевĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ мелĕсене – хăвăртлăха, янăравлăха, сасă хулăнăш – çинçĕшне, кĕвĕлĕхне кирлĕ пек улăштарма вĕренесси.

**Литература теорийĕн никĕсĕсем:**

• илемлĕ литература хайлавĕсемпе фольклор хайлавĕсене, вĕсен жанрĕсене уйăрма вĕренсе пырасси;
• хайлав тытăмне ăнланасси (композиции, сюжет);
• сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăвĕсене сăлтавласси;
• хайлаври сăнлăх тата сăнарлăх.
• пултарулăх хатĕрĕсене курма, вĕсемпе усă курма хăнăхасси.

Ачасен **хуравĕсем тăрăх вĕсен çак ăслай хăнăхăвĕсене** йĕрлеме, палăртма май пултăр:
• ача хайлавра сăнланă пулăма сăнарланă ĕçсене мĕн таран йышăнни – ăнланни;
• вăл хăйĕн кăмăл – туйăмĕ мĕнле улшăннине сăнама пултарни;
• хайлаври эпизодсем хушшинчи çыхăнăва курма: унти сăнласен пĕлтерĕшне, сăнарсен характерĕсене сăнама, хайлавăн содержанийĕпе формин шайлашăвне ăнланма пĕлни;
• хайлавăн тĕп шухăшне ăнланма, харкам тĕллĕн пĕтĕмлетӳсем тума.

**Тишкерӳ уйрăм ăслайĕсем:**

• чĕлхен сăнарлăхпа палăртулăх хатĕрĕсене вĕсен хайлаври вырăнĕпе тӳпине кура тишкерме пĕлни; хайлавра автор сăнарланă ӳкерчĕке куçкĕрет кăларма пултарни;
• хайлавра çыхăнусемпе хутшăнусене курма, сăлтавлама пĕлни;
• хайлаври сăнара пĕрлĕхлĕ йышăнма пултарни;
• автор мĕнле пăхнине, мĕнле кăмăлпа каласа панине, унăн позицине курма пĕлни;
• хайлав тĕп шухăшне ăнланма пултарни.

**Пуçламăш шкултан вĕренсе тухаканăн ç а к н а п ĕ л м е л л е (ăнланмалла)**:
- вĕреннĕ литература хайлавĕсен ятне, тĕп содержанине. çакна т у м а п у л т а р м а л л а:
-кĕнеке элеменчĕсене ( хуплашка, титул листи, тупмалли, ӳкерчĕк, аннотации) уйăрма;
- илемлĕ хайлав текстне ăшра вуласа ăнланма;
- хайлавăн темипе тĕп шухăшне палăртма;

- вуланин содержанине каласа пама;
- текста пĕлтерĕшлĕ пайсене уйăрама, текстăн ансат плане тума;
- текст çине таянса пĕчĕкçĕ монолог ăслама, ĕçсене, геройсене хак пама;
- сăвăллă хайлавсене пăхмасăр каласа пама;
- сĕннĕ тема тăрăх сăмах вĕççĕн пĕчĕкçĕ текст ăслама;
- тĕслĕх вырăнне фольклор хайлавĕсемпе усă курма;
- илемлĕ литература жанрĕсене ( юмах, калав, юптару), халăх юмахĕсене тата литература ( автор) юмахĕсене пĕр – пĕринчен уйăрма;
- вĕреннĕ материалтан суйласа илнĕ тĕрлĕ темăллă хайлавсен тĕслĕхĕсене асăнма;
- туяннă пĕлӳсене тата ăслайсемпе практикăра тата кулленхи пурнăçра усă курма;
- харкам тĕллĕн кĕнеке вуланă чухне;
- харкам тĕллĕн кĕнеке суйланă, унăн содержанине кĕнеке элеменчĕсем çине таянса палăртнă чухне;
- тĕрлĕ информацм хатĕрĕсемпе ( словарьсемпе, справочниксемпе, энциклопедисемпе, электрон пособийĕсемпе) ĕçленĕ чухне.

*2.* **Литература вулавĕ предметăн тытăмĕ**

1 класс

**Класс тулашĕнчи вулав** *(33 сех)*

**Пĕрремĕш класăн 1-мĕш çур çулĕнче** ачасен вулав хăнăхăвĕсем йĕркеленсе çитеймен пирки литература итлевĕсем пулаççĕ. Литература итлевĕн тĕп тĕллевĕсем тесе çаксене палăртатпăр:

- ачасене литература хайлавĕсемпе кăсăклантарса ярасси, илемлĕ хайлавсене итлесе ăнланма, ăса хывма вĕрентсе пырасси;
- ачасенче ырăпа усала, хурапа шурра туяс туйăма, илем сисĕмне амалантарса ярасси, тĕнче курăмне анлăлатасси;
- ачасен ăнлав пултарулăхне амалантарасси.

Вĕрентӳ задачисемпе пулас результачĕсене, йĕркелеме палăртнă компетенцисене шута илсе ĕçе 4 тапхăра пайлама пулать.

**1-мĕш тапхăр.** Илемлĕ хайлав çинчен пĕтĕмĕшле ăнланасси. Проза тата поэзи хайлавĕсем. Вĕсене итлеме-тăнлама, йышăнма вĕренсе пырасси.

**2-мĕш тапхăр.** Халăх сăмахлăхĕ. Вак жанрсем. Юмахсем. Халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсем сăмах вĕççĕн çӳренине, вĕсен авторĕ çуккине ăнланасси. Вак жанрсемпе паллашасси: вĕсен тĕслĕхĕсене итлесси. Тупмалли юмахсемпе пулмасла халапсем хайласси.

**3-мĕш тапхăр.** Литература хайлавĕ. Унăн ячĕ. Шӳтлĕ хайлавсем. Вĕсене калас уйрăмлăхсем (интонаци, сасă вăйĕпе çӳллĕшĕ, пуплев хăвăртлăхĕ, пит-куçпа кӳлепе хусканăвĕсем). Шӳте ăнланма вĕренсе пырасси.

**4-мĕш тапхăр.** Литература жанрĕсем (калав тата сăвă), вĕсене уйăрма, вĕсен уйрăмлăхĕсене ăнкарма, тĕслĕхĕсене итлеме-тăнлама, йышăнма вĕренсе пырасси.

**2-мĕш çур çулта** ачасем пуçламăш вулав хăнăхăвĕсем туянса çитереççĕ, вĕсен итлев хăнăхăвĕсем калăпланнă теме пулать.

Литература вулавĕ темиçе тĕллеве пĕрлĕхлĕн пурнăçа кĕртме май панине (вулама, текстпа ĕçлеме тата литература хайлавне ăн- ланма, тишкерме вĕрентесси; кĕнекене юратма, унпа ĕçлеме, харпăр хăй тĕллĕн вулама хăнăхтарасси) шута илсе уроксен пайрам тата харкам тĕллевĕсем анлăланаççĕ. Çапах та вĕсем пĕрремĕш çур çултисенчен пачах, принциплă уйрăлса тăмаççĕ. Вĕсем çинче никĕсленсе вĕсен анлăрах та тарăнрах тăсăмĕ пулаççĕ.

Иккĕмĕш çур çулти уроксене, вĕсен тĕллевĕсемпе задачисене, йĕркелемелли ăслай-ăнланусене (компетенцисене) шута илсе, тĕпрен илсен 2 тапхăра уйăрма пулать.

**1-мĕш тапхăр**. Халăх сăмахлăхĕ.

Иккĕмĕш çур çулта ачасен халăх сăмахлăхне вĕренесси самай анлăрах пулмалла; жанр тĕлĕшĕнчен те, пĕлӳ-ăслай тĕлĕшĕнчен те.

**2-мĕш тапхăр**. Литература тĕсĕсем (жанресем) (калав, сăвă, юптару).

**Сехетсене уйăрни**
**1 класс**

| № п/п | Раздел | Сехетсен шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Шкула каяр-ха вĕренме | 2 сех. |
| 2 | Халăх сăмахлăхĕ | 4 сех. |
| 3 | Юмах юпа тăрринче… | 1 сех. |
| 4 | Вăйă вылятпăр | 2 сех. |
| 5 | Теттесем | 1 сех. |
| 6 | Ачасем çинчен | 2 сех. |
| 7 | Чĕр чунсем çинчен | 3 сех. |
| 8 | Тавралăх асамлăхĕнче | 1 сех. |
| 9 | Килсе çитрĕ хаваслă хĕл | 3 сех. |
| 10 | Ача – пăча сăмахлăхĕ | 3 сех. |
| 11 | Юмах ятăм, юптартăм | 1 сех. |
| 12 | Пирĕн вăйă-кулă | 1 сех. |
| 13 | Ачасем çинчен | 4 сех. |
| 14 | Чĕр чунсем çинчен | 3 сех. |
| 15 | Тавралăх – асамлă тĕнче | 2 сех. |

**2 класс**

**Шкула каяр-ха вĕренме. (2сех.)** Эпĕ иккĕмĕш класс ачи.«Илемлĕ хайлав», «автор», «хайлаври сăнарсем», «хайлавра сăнланă ĕç йĕрки» ăнлавсем.

**Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв. (7сех.)** Савнă çĕр, Чăваш çĕр-шывĕ. Публицистика хайлавĕн тĕп уйрăмлăхĕ. Сăвăласа çырнă хайлав. Илемлĕ хайлав; Хаçат-журналсенче тĕл пулакан текстсем.Ăслăх хайлавĕ; унăн тытăмĕпе чĕлхи. Класс тулашĕнчи вулав. Ылтăн тумлă кĕркунне.

**Халăх сăмахлăхĕнчен (12 сех.)** Сăвăласа çырнă илемлĕ хайлав. Халăх сăмахлăхĕ. Тупмалли юмахсем. Пулмасла халапсем. Хутлам е вĕççĕр такмаксем. Йăла юррисем. Вăйă юррисем. Çăварни. Пуплешӳ сăввисем. КТВ. Кил-йыш. Ачасен пурнăçĕ. Чăвашсен ача-пăча вăййисем. Улăп халапĕсем. Улăп халапĕсем.

**Кĕркунне.(6 сех.)** Сывă пул, çу кунĕ.П.Эйзин, Кĕр иртрĕ.В.Ямаш. Кĕр çитрĕ. М.Трубина, Ылтăн çумăр. Н.Сладков. Симĕс çумăр. Н.Теветкел, Эсир пакшанна курнă-и?Г.Харлампьев. Хура кĕркунне. С.Сарпай, Кĕркунне. В.Аптраман. Тăрнасем. И.Микулайĕ, Хĕл ларас умĕн. С.Аксаков. КТВ. Чĕр чунсем – пирĕн туссем.

**Эпир – туслă та хаваслă ачасем.(6 сех.)**Шкул ачи. П.Хусанкай, Сапăрлăх çинчен. С.Иванов.Чăрсăр автансем. А.Кăлкан, Алюшпа Кĕтерук. В.Осеева. КТВ. Сăпайлă, ырă кăмăллă пулма мĕн пĕчĕкрен вĕрен. Сылтăм алăпа сулахай алă. Шухши Иванĕ. Микула пичче кучченеçĕ. О.Савандеева. Вăт епле пулăшать. А.Барто, Çӳпçе. И.Малкай.

**Тăван кил-йышра. (3 сех.)** Хăш вăхăтра çывăрать-ши анне? Б.Данилов. КТВ. Пирĕн кил-йыш. Ан кӳренсем, атте! В.Сухомлинский.

**Юмахсем. (9 сех.)** Кинеми, мăнукĕ тата чăпар чăх. Çăткăн упа çурисем. Венгр халăх юмахĕ. Шиклĕ шăши. Н.Иванов. Çилпе хĕвел. КТВ. Юмах тĕнчинче. Сарă аист. Китай халăх юмахĕ. Ухмах Иван. Чăваш халăх юмахĕ. Çырлана кайсан. Н.Карай. Кӳлĕ. Ю.Ярмыш, Пуртă. А.Толстой.

**Хĕл (9 сех).** Юр çунă. А.Алка, Юр. Н.Шелепи.Çĕнĕ çул юрри. А.Алка. Раштав уйăхĕ. Н.Матвеев. Хĕллехи каç. А.Пушкин (П.Хусанкай куçарнă) Хĕллехи вăрман. Х.Çеменĕ. КТВ.Хĕл каçакан вĕçен кайăксем. Кукăр сăмса. Г.Луч. Хĕл каçни. Н.Сладков. Юр пике. В.Эктел.

**Ĕç телей те савăнăç кӳрет.(8 сех.)** Эпĕ сехет çĕмĕрни. И.Яковлев. КТВ. Ырă ĕçсем пурнăçа илем кӳреççĕ. Мухтанчăк çерçи (юмах). Н.Иванов. Куршанак çыпăçрĕ. Шухши Иванĕ.

Кулачă (юмах) И.Яковлев, Ĕçчен Нарспи. К.Иванов. Пахча хуралçи. Н.Иванов. Кăткă Арăсланĕ. Петĕр Яккусен. КТВ. Пирĕн йăла-йĕрке.

**Чĕр чунсем – пирĕн туссем (13 сех.)** Тискер кайăксем. М.Пришвин. Ай, пакша! Г.Луч. КТВ.Тĕлĕнмелли, пĕлмелли – кашни утăмрах. Пурăш. Хв.Уяр, Кăткăсем. А.Хум. Чĕкеçсем мĕншĕн сивĕннĕ? Г.Луч. Юрă ăстисем. Г.Харлампьев. Çăмăлттай. М.Пришвин. Чăх чĕппи. К.Чуковский çырни тăрăх. КТВ. Паттăр та хăюллă çынсем çинчен. Мăр-мăр кушак мĕнрен тĕлĕннĕ. В.Сухомлинский. Çырла пиçсен. Г.Харлампьев. Мулкач çури. Б.Заходер. КТВ. Манăн анне – чи хитри.

**Килчĕ ырă çуркунне. (6 сех.)** Тумла. Калина Малина. Пуш уйăхĕнче. Н.Матвеев. Çуркунне çитрĕ. «Хресчен сасси» хаçатран. Çуркунне çитсен. К.Иванов. Пăр каять. Н.Шелепи, Упа йĕнни. Н.Сладков. КТВ. Çуркунне ал парать таврана. Çурхи сасă. А.Николаев, Çур çеçкисем. М.Козлов. Çуркунне. Н.Мартынов, Пĕрремĕш аслати. А.Игнатьев (Ибасов)

**Ӳсен-тăран тĕнчи.( 8 сех)** Пĕр йăхри йывăçсем. Н.Матвеев. КТВ. Мухтавлă ентешĕмĕр Андриян Николаев. Юман. Ç.Элкер çырнинчен. Вăрманăн пĕрремĕш кучченеçĕ. Г.Орлов. Хурлăхан, ан хурлан. М.Волкова. Пулă тăвăнни. Н.Сладков. Çумăр. Г.Харлампьев, Каç пулчĕ. Н.Шупуççынни. КТВ. Эпир туслă ачасем.

**Çу уйăхне кĕтĕмĕр.(13сех)** Малтанхи аслати. Çумăр ташши. КТВ. Пирĕн вăйă карти. Аслатиллĕ çумăр. Çуллахи ир. Утă çинче вăрманта. Утăра. Хирте. КТВ. Манăн юратнă кĕнеке. Ачасен вулав хăвăртлăхне тĕрĕслесси. Пĕтĕмлетӳ. Çулла вуламалли кĕнекесем.

**Пĕрремĕш çур çулхи вĕрентĕве 4 тапхăра пайлама пулать.**

*1 тапхăр.Илемлĕ хайлав çинчен пĕтĕмĕшле ăнланасси.*

<u>Ĕç шалашĕ</u>. Ăса хывмалли ăнлавсем. Йĕркелемелли ăнлану-ăслайсем (компетенцисем).

«Хайлав» тата «илемлĕ хайлав» ăнлавсене уçăмлани. Ансат, ачасен ӳсĕмне тивĕçлĕ илемлĕ хайлавсене итлесси-тăнласси, йышăнасси (восприятие). Хайлав авторĕ. Хайлава итленĕ май хăйсен мĕнле кăмăл-туйăм çуралнине сăнасси.

*<u>Итлев карти</u>.* «Шкула каяр-ха вĕренме» пайра сĕннĕ хайлавсем.

*2 тапхăр.Халăх сăмахлăхĕ. Вак жанрсем. Юмахсем.*

<u>Ĕç шалашĕ.</u> Ăса хушмалли тĕп ăнлавсем, йĕркеленмелли ăслай хăнăхусем.

«Халăх сăмахлăхĕ» тата «ача-пăча сăмахлăхĕ» ăнлавсене уçăмлани. Халăх сăмахлăхĕн хайлавĕсене тахçан авал хайланине, вĕсем ламран лама якалса сăмах вĕççĕн куçса пынине, вĕсен авторĕ халăх пулнине ăнланни. Ача-пăча сăмахлăхĕн вак жанрĕн хăш-пĕр тĕслĕхĕсемпе паллашни, вĕсене (чĕнӳ-йыхрав юррисем, шутлав сăввисем, хăвăрткаларăшсем, тупмалли юмахсем) палласа илме пултарни, вĕсен хăйевĕрлĕхне, йĕркеленĕвне сăнама пĕлни. Хăйсем çак жанр тĕслĕхĕсене хайлама хăтланни.

Чĕнӳ-йыхрав юррисем. Авал вĕсем йăла-йĕркене тытса пырассипе çыхăннă хайлавсем пулни (çут çанталăка, пулăмсемпе япаласене ыйтаççĕ, йăлăнаççĕ, ӳкĕтлеççĕ).

Чĕнӳ-йыхрав юррисен йĕркеленĕвĕ (чĕнӳ, ӳкĕтлени-ыйтни-йăлăнни, тав тума пулни). Хайлавсене вĕсен тытăмĕпе йĕркеленĕвне кура ушкăнласси: мĕн тума ӳкĕтлеççĕ (кайма, килме т.ыт.те) мĕн пама пулаççĕ.

Ачасем хăйсем, тĕслĕхрен, хĕл часрах кайтăр, çу часрах çиттĕр тесе ӳкĕтлесе чĕнӳ-йыхрав юррисем хайлама пултарни.

Шутлав сăввисем. Хайлавсен хăйевĕрлĕхĕ: мĕн тума кирли (ертӳçине, хăвалакана палăртма т.ыт.те); сюжет тата композици («сик тух», «мана тыт» т.ыт.сăмахсемпе вĕçленни); пытарăнчăк сăмахсем, шутлав пурри (пĕрĕ,ирĕ,вирĕ...)

Хăвăрткаларăшсем. Жанр хăйевĕрлĕхĕ. Хăвăрткаларăшсене калама йывăррипе вăрттăнлăхне ăнланни (ку хайлавсене ытларах пĕр сасăсемпех, анчах тĕрлĕ йĕркепе усă курса калаççĕ. Çавна пула сасă тăвакан аппарат самантрах тепĕр май йĕркеленме ĕлкĕреймест).

Хăвăрткаларăшсене мĕнле каламалли. Малтан васкамасăр калама пуçлаççĕ те хăвăртрах та хăвăртрах, кашни сасса уçăмлă, сывлăш çавăрса ямасăр каламалла. Харкам тĕллĕн хăвăрткаларăшсем хайлама хăтланни.

Тупмалли юмахсем. Жанр хăй евĕрлĕхне ăнланни (вĕсене ахаль кăна итлемелле мар, тупсăмне тупмалла). Ачасем хăйсем те тупмалли юмах ăслама пултарни.

Тупмалли юмахсен тытăмĕ. Вĕсем икĕ пайран тăраççĕ, вăрттăнлăхĕ пĕр пайĕнче. Вĕсене хайламалли тĕп мелсем (танлаштару, сăпатлантару), вĕсене палăртма, çак мелсемпе хăйсем те тупмалли юмахсем хайланă чух усă курма пĕлни.
Пĕр япала çинчен тĕрлĕ тупмалли юмах , тĕрлĕ япала çинчен пĕр евĕрлĕ тупмалли юмах пулма пултарнине ăнланни.

Юмахсем. Жанр хăй евĕрлĕхне ăнланни (юмахра мĕн çинчен те пулин юптарса калаççĕ. Унта чĕр чунсем те çынсем пекех калаçаççĕ, нихçан та пулма пултарайман ĕçсем пулса иртеççĕ). Юмахсен сюжет тытăмне, чĕлхин хăш-пĕр вăрттăнлăхĕсене сăнаса ăнланни (пуçламăшĕ, вĕçĕ пĕрешкелтерех, юмахсенче час-часах пĕр сыпăках, пĕр ĕç çинченех темиçе хут калани пулать).
<u>*Итлев карти.*</u> «Халăх сăмахлăхĕ» тата «Юмах юпа тăрринче» пайсенчи хайлавсем (чĕнӳ-йыхрав, шутлав сăввисем, хăвăрткаларăшсем, тупмалли юмахсем, чĕрчун юмахĕсем).
*3 тапхăр.Литература хайлавĕ. Сăвăласа тата прозăллă хайлавсем.*
<u>*Ĕç шалашĕ*</u>. Ăса хывмалли тĕп ăнлавсем, йĕркелемелли ăслай-хăнăхусем (компетенцисем).

«Илемлĕ литература хайлавĕ», «автор» ăнлавсене уçăмлани. Илемлĕ хайлава тĕрлĕрен (сăвăласа тата сăвăламасăр, прозăлла) калăплама май пуррине ăнланни. «Калав» ăнлав (вăл илемлĕ хайлавăн пĕр тĕсĕ (жанрĕ), унта ĕçсемпе пулăмсене сăвăламасăр каласа параççĕ). Калава ансаттăн тишкерме ( Мĕн çинчн каланă? Сăмах камсем е мĕнсем çинчен пырать?), тытăмне сăнама (ĕç мĕнле пуçланать, мĕнле тăсăлса пырать, ĕç мĕнпе вĕçленет) пĕлни.

«Сăвă» ăнлав. Сăвăласа çырнă хайлавсен тулаш (йĕрке вĕçĕсенчи сасăсем пĕр пек янăрани) хăй евĕрлĕхĕпе шухăш уçăмлăхĕ шайлашса тăнине ăнланни. Автор сăвăсенче тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине ăнланни, ăна сăнама пултарни.
<u>*Итлев карти*</u>. «Вăйă вылятпăр», «Теттесем», «Ачасем çинчен» пайсенчи хайлавсем.
*4 тапхăр.Литература хайлавĕ. Унăн ячĕ. Шӳтлĕ хайлавсем.*
<u>*Ĕç шалашĕ.*</u> Ăса хымалли (ăша хумалли) тĕп ăнлавсем, йĕркелемелли ăслай-ăнланусем.
Сăвăласа çырнă хайлавсем. Поэзи хайлавĕсенче сăвăç тĕнчене сăнласа çырнине ăнланни. Автор сăвăсенче тĕрлĕ кăмăл-туйăма палăртнине, сăвăсем тĕрлĕ кăмăл-туйăм хускатма пултарнине ăнланни. Шӳтлĕ сăвăсем. Шӳт мелĕсем.

Калав ячĕ, теми. Калав темипе ячĕ мĕнле çыхăннине ăнланни. Калаври ĕç йĕркине, автор пулса иртекен ĕçсене мĕнле кăмăлпа каласа панине сăнлама пĕлни.

Илемлĕ хайлавсен чĕлхине сăнама вĕренсе пыни.
<u>*Итлев карти*</u>. «Ачасем çинчен», «Чĕр чунсем çинчен», «Тавралăх – асамлă тĕнче» пайсенчи хайлавсем.
Иккĕмĕш çур çулхи вĕрентӳ çинчен(2 тапхăра пайлама пулать)
*1 тапхăр. Халăх сăмахлăхĕ.*

Иккĕмĕш çурçулта ачасен халăх сăмахлăхне вĕренесси самай анлăрах пулмалла; жанр тĕлĕшĕнчен те, пĕлӳ-ăслай тĕлĕшĕнчен те.
<u>Ĕç шалашĕ.</u> Ăша хумалли тĕп ăнлавсем, йĕркелемелли ăслай-ăнланусем(компетенцисем).

Халăх сăмахлăхĕн вак жанрĕсене (тупмалли юмахсем, хăвăрткаларăшсем, чĕнӳ-йыхрав юррисем) тарăнрах пĕлни. Вăйă юрри-сăввисемпе, пулмасла халапсемпе вĕçсĕр такмаксене уйăрма пĕлни. Вĕсен тытăм, шалаш хăйевĕрлĕхне курма, кĕвви-çемми янравлăхне туйма вĕренсе пыни.

«Юмах» тата «халап» ăнлавсене уçăмлама пуçлани (юмаха юптарса калаççĕ, халап ăса вĕрентсе калакан кĕске хайлав, унта та кунта та пулма пултарайман ĕçсем, унта та кунта та автор ĕмĕчĕ палăрать т.ыт.те)

Кашни халăхăн юмах-халапĕ пулнине, вĕсенче çынсем хăйсен пурнăçне, шухăш-ĕмĕтне сăнланине ăнланма пуçлани.
<u>Вулав карти.</u> «Ача-пăча сăмахлăхĕ», «Юмах ятăм, юптартăм» сыпăксенчи хайлавсем.
*2 тапхăр. Литература тĕсĕсем (жанрĕсем) (калав, сăвă, юптару).*
<u>Ĕç шалашĕ</u>. Ăша хумалли тĕп ăнлавсем йĕркелемелли ăслай-ăнланусем (компетенцисем).

Литература хайлавĕ. Ячĕ. Тема. Автор. Хайлавра автор хăй çырса кăтартни çине мĕнле пăхни те палăрни.

Хайлавсене тишкернĕ май ансат сăнарлăх хатĕрĕсемпе мелĕсене курма пултарни.

Литература жанрĕсен (юмах, калав, сăвă, юптару) тĕслĕхĕсене уйăрма, вĕсен тытăм тата шалаш хăйевĕрлĕхне курма хăнăхса пыни.

Калав. Ячĕ, сăнарĕсем, Вĕсене танлаштарса тишкерме, автор хăй вĕсене мĕнле курнине, мĕнле куçпа пăхнине ăнланма пултарни.

Сăвă. Поэзи хайлавĕсен хăй евĕрлĕхне, тытăмне, кĕвĕ-çемĕ янăравлăхне ăнкарса пыни.
Юптару. Ачасен илемлĕ хайлавсене итлес-тăнлас, вулас туртăмĕсем аталанса пыни, шӳтлес-юптарас, шахвăртса калас пултарăвĕсем тарăнланни. Вулав карти. «Пирĕн вăйă-кулă», «Ачасем çинчен», «Чĕр чунсем çинчен», «Тавралăх – асамлă тĕнче» сыпăксенчи хайлавсем.

| № | Раздел теми | Сехет шучĕ |
|---|---|---|
| 1 | Шкула каяр-ха вĕренме. | 2 |
| 2 | Мĕн-ши вăл Тăван çĕршыв. | 7 |
| 3 | Халăх сăмахлăхĕнчен | 12 |
| 4 | Кĕркунне. | 6 |
| 5 | Эпир – туслă та хаваслă ачасем.. | 6 |
| 6 | Тăван кил-йышра. | 3 |
| 7 | Юмахсем. | 9 |
| 8 | Хĕл. | 9 |
| 9 | Ĕç телей те савăнăç кӳрет. | 8 |
| 10 | Чĕр чунсем – пирĕн туссем. | 13 |
| 11 | Килчĕ ырă çуркунне. | 6 |
| 12 | Ӳсен-тăран тĕнчи. | 8 |
| 13 | Çу уйăхне кĕтĕмĕр. | 13 |
| пĕтĕмпе | | 102 |

**3 класс**

**1. Ак çитрĕ сентябрь…(3 сех.)**

Литература вулавĕ предметăн 3 –мĕш класс вали палăртнă тĕллевĕсемпе задачисем. Калав, калаври сăнарсем, калаври ĕç аталанăвĕ, ăнлавсем. Калаври сăнарсем. Ĕç аталанавĕ. Пулăмсем, сăнарсен ĕçĕсемпе хăтланăшĕсен хушшинчи çыхăну.

**2. Чăваш çĕршывĕ (5 сех.)**

Чăваш ен илемĕ, юхан шывсемпе вăрмансем. Чăваш çыннисемпе ытти халăхсем хушшинчи туслăх, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнни. Савнă çĕр, Чăваш çĕршывĕ. Чăваш республикин Патшалăх атрибучĕсем.Калав ячĕ, теми, тĕп шухăшĕ. Сăвăллă хайлав, унти кăмал-туйам, сăнарлăхпа палăртулăх мелĕсем. Сăвăлла хайлав, унти кăмал-туйăм, сăнарлăх мелĕсем.Чăвашсен юрри-ташши. Çĕкленӳллĕ, хавхалануллă сăавăлла хайлавсем.

**3. Кĕркунне (7 сех.)**

Кĕрхи çут çанталăк, çынсен ĕçĕ-хĕлĕ. Кĕр пуçламашĕн сăнлăхĕсем, вĕсене сăнламалли мелсем. Класс тулашĕнчи вулав (КТВ) Шкула, ачасемĕр, шкула! Ылтăн кĕркунне сăнлăхĕсем, вĕсене сăнлани. Сăнарлăх хатĕрĕсем. Сăнлавлă калав. Сăнарсем. Сăнарлăх мелĕсем. Хайлавăн сюжет аталанăвĕ. Чи çивĕч самант. Калаври сăнарсем. Тĕп сăнар. Сăвăласа çырнă сăнлавлă хайлав. Сăвăра автор туйăмĕ санланни. Тупмалли юмахсем – халăх сăмахлахен тĕслĕхĕсем. Çыравçăсем хайланă тупмалли юмахсем.

**4. Халăх сăмахлăхĕ (7 сех.)**

Вăйă-шăпа юррисем. Ача-пача вăййисем. Пулмасла халап. КТВ. «Ĕç– пурнăç илемĕ».
Çыравçăсем хайланă пулмасла халапсем. Юптарусем.

**5. Улăп йăхĕнчен эпир, туссем… (4 сех.)**

Улăп халапĕсем тата ытти халăх халапĕсем. Прозăлла юптарусем. Юптарусен тытăмĕ. Мифсем. Улăпхалапĕсем. Халапсен пурнăçри выранĕпе пĕлтерĕшĕ. Тĕрлĕ халăх халапĕсем, вĕсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлахĕсем.

**6. Юмах юпа тăрринче (5 сех.)**

Чăваш халăх юмахĕ. Чĕр чун юмахĕсем. КТВ Ачалăх – савăк вăхăт. Тĕрлĕ халăх юмахĕсем. Йăла юмахĕсем. Асамлă юмахсем.

**7. Асамçă хĕл (6 сех.)**

Хĕллехи çут çанталăк. Этем ĕçĕ-хĕлĕ. Чĕр чунсен пурнăçĕ. Хĕл илемĕ калавсенче, юмахсенче, ÿнерçĕсен ÿкерчĕкĕсенче сăнланни. Поэзи хайлавĕсенчи сăнарлăх мелĕсем. Хайлаври сăнарсем. Юмахра сăнланнă вăхăтпа сăнарсен характерĕн шайлашăвĕ. Сăвăласа çырнă илемлĕ хайлавсен кĕввипе чĕлхи. Вĕсенче автор кăмăл-туйăмĕ палăрни. Калав теми, тытăмĕ, тĕп шухăшĕ.КТВ Асанне арчинчи мерчен.

**8. Эпир – сăпайлă ачасем (18 сех.)**

Ачасен пурнăçĕ, вĕсен туслăхĕ. Ачасем хăйсене сапăр та тирпейлĕ тытма тăрашнине, аслисене хисепленине, сăпайлă пулнине санлакан калавсем, сăвăсем, статьясем. Н. Карай. «Йăмăк». М. Джалиль. «Çывракан ача». Р. Минатуллин «Пулăшакан». А Кăлкан «Наян Кампур», А. Галкин «Шăна кăмпин шăпи». Н Иванов «Чечек çыххи». И Шухши «Кĕрен тÿпе». Г. Волков «Пуянлăх хакне çĕклекен çеç пĕлет». Л. Ковалюк. «Хăравçă».

КТВ Вăрман калавĕсем. А. Еруслaнов «Хапхаçă». О. Уайльд. «Хаяр Улăп».Исмай Исемпек. «Шăвăç витре». К. Ушинский. «Вăрманти ачасем».КТВ Çут çанталăк тата эпĕ.

**9. Çур хаваслăхĕ (9 сех.)**

Çут çанталăк черĕлни. Чĕр чунсен пурнăçĕпе çынсен ĕçĕсем. Ачасен çурхи вăййисем. Н. Исмуков. «Çурхи тĕнче», Л. Смолина «Çуркунне пуçланать» сăввисем. Н. Некрасов. «Ешĕл шав». Уйăп Мишши «Çурхи вăйă». Мĕтри Кипек «Çурхи вăрманта». Соколов-Микитов «Вăрманта». Г. Снегирев «Малтанхи хĕвел». К. Иванов «Çуркунне çитсен». Н. Матвеев «Тавран аилем кÿреççĕ», А. Артемьев «Çурхи кун». КТВ Çут çанталăк тата эпĕ.

Пĕтемлеÿ урокĕ.

**10. Кĕрленĕ вăрçă çĕр çинче тахçан (7 сех.)**

А.Алка. «Малтанхи кун». А.Галкин. «Çумăр куççулĕ». Ю.Николаева «Вăрçă çăкăрĕ». А.Тимбай. «Хурçă хĕр». А.Каттай «Берлинти палăк». А.Кипеч.«Çĕр улми сутма кайни».

**11. Чĕр чун тĕнчи (11 сех.)**

Н. Ишентей «Аптраман кăвакалсем». С. Элкер «Кашкăрсемпе çапăçни». Н. Иванов «Ăсанпа Хураçка». Л. Ковалюк «Мулкач та тутă пултăр». Н. Матвеев «Уртăш». Н. Матвеев «Çара çерси». КТВ Юмах ятăм, юптартăм. Н. Матвеев «Каюра». Г. Орлов «Кащкăр тавăрăвĕ». Калав тĕп шухăшĕ.

**12. Ытарайми, асран кайми тăван тавралăх** ***(20 сех.)***

Çынсем таван тавралăха упрама, илем кÿме тăрăшнине, çак ĕçе ачасем те хутшăнма пултарнине санлакан калавсемпе сăвăсем. Н. Ишентей «Аптраман кăвакалсем». С. Элкер «Кашкăрсемпе çапăçни». Н. Иванов «Ăсанпа Хураçка». Л. Ковалюк «Мулкач та тутă пултăр». Н. Матвеев «Уртăш».

Н. Матвеев «Çара çерси». КТВ Юмах ятăм, юптартăм. Н. Матвеев «Каюра». Г. Орлов «Кащкăр тавăрăвĕ». Калав тĕп шухăшĕ.

Вулав хăнăхăвĕсем. Тĕрĕс анласа, пĕр тикĕссĕн, сăмахсене вакламасăр, вăтам хăвăртлăхпа буласси. Вулав хăвăртлăхĕ минутра 70 сăмахран кая мар пулмалла (ăшра вуланă чухне саамах шучĕ 80 таран ÿсмелле). Шухăш аталанăвне кăтартакан сăмахсене ансат мелсемпе усă курса палăртасси. Шухăшне тата тĕллевне кура текста тивĕçлĕ интонаципе (хăвăрт е хулен, сасса хăпартса е хăпартмасăр,е логика пусăмĕсемпе логика тăхтавĕсем туса) вуласси. Сасăпа вуланă чухне харкам вулава асăрхаса пырасси, йанăш вырăнсене тепĕр хут тĕрĕсвуласа тÿрлетесси.

Текстпа ĕçлесси. Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси.Вуланă текстри ĕçсем мĕнле аталанса пынине йĕркипе аса илсе каласси (ансат план тăрăх). Панă ыйтăва хуравлама текстри кирлĕ вырана тупасси. Текстăн шухăш тĕлĕшĕнчен вĕçленнĕ пайсене уйăрасси, верентÿçĕ пулăшнипе текст ятне ăнлантарасси, унăн тĕп шухăшне палăртасси.

Арсат план ăслăласси, план тăрах текст ăшлăхне асăмласа каласа парасси (туллин, кĕскен, суйлавлăн). Вуланине туллин тата суйлавлă каласа панă чух сăмахлă ÿкерчĕксем тавасси, санарлă сăмахсемпе, сăмах майлашĕвĕсемпе, синонимсемпе вырăнлă усă курасси.

Сăнарсене, çут çанталăка сăнласа катартнă чух усă куракан сăмахсене , вĕсен

майлашӗвӗсенетекстра тупасси. Сӑмахӑн текстри пӗлтерӗшне ӑнланасси. Сӑнарсене вӗрентӳҫӗ пулӑшнипе хак парасси. Курни-илтни, сӑнани ҫинчен ҫыхӑнуллӑ калав тӑвасси. Каланӑ шухӑша вуласа тухнӑ текстри тӗслӗхпе ҫирӗплетесси. Инсцинировкӑсене хутшӑнса роль самахӗсене тивӗҫлӗ интонаципе вуласси.

Илемлӗ литература жанрӗсен хӑш-пӗр уйрӑмлӑхӗсем: юмах (унта тӗлӗнмелле, чӑн пурнӑҫра пулма пултарайман ӗҫсем пулса иртеҫҫӗ), юптару (сӑнарӗсем – тӗрлӗчӗр чун, йывӑҫ-курӑк; вӗҫӗнче вӗрентсе калани пур), сӑвӑ (йӗркисем хӑйне евӗр виҫеллӗ, йӗрке вӗҫӗсем пӗр пекех янӑраҫҫӗ).

Вӗренӳ кӗнекине чухласси: кирлӗ хайлава унӑн тупмаллинчи ячӗ тарӑх тупасси; кӗнекене пӗр авторӑн калавӗ е сӑвви тӗлне уҫасси; тема тӗлӗшӗнчен пӗр-пӗрнеҫывӑх хайлавсене асӑрхасси; текст хыҫҫӑнхи ӗҫсене харпӑр хӑй тӗллӗнӑнланса пурнӑҫласси.

Класс тулашӗнчи вулав

Вулав материалӗ: чӑваш, вырӑс ытти таванла халӑхчен писателӗсем ачасем вали ҫырнӑ 15-20 кӗнеки, «Тантӑш» хаҫатпа «Тетте» журналти материалсем (вӗрентӳҫӗ суйласа илнӗ тӑрӑх).

Вулав тематики: тӑван таврaлӑх илемне сӑнлакан, пурнӑҫа юратма, ҫут ҫанталӑка упрама, сӑпар та тараватлӑ пулма вӗрентекен, ӗрлӗ халӑх ывӑлӑ-хӗрӗсенпархатарлӑ ӗҫ-хӗлне санлакан сӑвӑсемпе калавсем, пысӑкрах калӑплӑ хайлав сыпӑкӗсем, юмахсем.

Ача-пӑча кӗнекипе ӗҫлесси (пӗлӳсем, ӑслайсемпе хӑнӑхусем). Кӗнеке пайӗсене пӗлесси: титул листи, ум сӑмах, тупмалли, вӗҫӗнче калани. Кӗнеке мӗн ҫинченнине унӑн пайӗсем тӑрӑхӑнкарасси. Класс тулашӗнчи вулав урокӗ валли кирлӗ кӗнекесене шыраса тупасси. Класс тулашӗнче I ҫур ҫулта эрненре вӑтамран 10-12, II ҫур ҫул вӗҫӗнче 20-25 страницӑран кая мар вуласси, вуласа пӗлнине вӗрентӳҫӗ ыйтӑвӗсем тӑрӑх каласа парасси. Кӗнекен ятне, авторне аса илме пӗлесси. Паллашнӑ писателӗн 2-3 кӗнекине астӑвасси. Сӗннӗ кенекесен списокӗпе, тема картотекипе усӑ курасси.

Ҫӗнӗ литература вӑййисем выляма вӗрентесси. Вӗсен класс тулашӗнче те выляттарасси.

| № | Тема | Сехет шучӗ | Тӗрӗслев ӗҫӗсем |
|---|---|---|---|
| 1 | Ак ҫитрӗ сентябрь… | 3 | |
| 2 | Чӑваш ҫӗршывӗ | 5 | |
| 3 | Кӗркунне | 7 | |
| 4 | Халӑх сӑмахлӑхӗ | 7 | |
| 5 | Улӑп йӑхӗнчен эпир, туссем… | 4 | |
| 6 | Юмах юпа тӑрринче | 5 | |
| 7 | Асамҫӑ хӗл | 6 | |
| 8 | Эпир – сӑпайлӑ ачасем | 18 | |
| 9 | Ҫур хаваслӑхӗ | 9 | |
| 10 | Кӗрленӗ вӑрҫӑ ҫӗр ҫинче тахҫан | 7 | |
| 11 | Чӗр чун тӗнчи | 11 | |
| 12 | Ытарайми, асран кайми тӑван тавралӑх | 20 | Пӗтӗмлетӳ калаҫӑвӗ. |

## 4 класс

**Вулав карти.** Ку вӑл ман Тӑван ҫӗр-шыв. Чӑваш халӑхӗ. Чӑваш чӗлхи. Тӑван халӑхӑн аваллӑхӗ, ун ҫинчен калакан ваттисен сӑмахӗсем, калавсем, сӑвӑсем, статьясем, пысӑкрах хайлав сыпӑ- кӗсем.

**Кӗр ҫитрӗ.** Кӗрхи ҫут ҫанталӑк. Ҫынсен ӗҫӗ-хӗлӗ. Чӗр чунсен пурнӑҫӗ. Ҫынсем ҫут ҫанталӑка упрассишӗн тӑрӑшни, ҫак ӗҫе ачасем те хутшӑнни. «Тӑван тавралӑх» экскурси.

**Кусем - манӑн туссем.** Ачасен пурнӑҫӗ, вӗсен юлташлӑхӗпе туслӑхӗ, ӗҫченлӗхӗпе сӑпайлӑхӗ. Туслӑ тантӑшсем тӑван халӑхӑн ырӑ йӑли-йӗркине асра тытни.

**Ырӑпа усал.** Ултавпа суя, тӳрӗлӗх-чӑнлӑх, хӗрхенӳпе хытӑ чунлӑх, чурӑслӑх, ӗҫченлӗхпе наянлӑх, каппайчӑклӑхпа сӑпайлӑх, тӳркеслӗхпе ыр кӑмӑллӑх ҫинчен калакан хайлавсем, юмахсем.

**Çуркунне çитсессĕн...** Çурхи вăхăта, пурнăç илемĕпе унăн асамлăхне сăнлакан, çак илеме упрама чĕнекен хайлавсем.

**Атте-анне пурри - телей те пуянлăх.** Çемье, кил-йыш, çывăх çынсем çинчен калакан хайлавсем.

**Çу пуçланчĕ.** Çуллахи çут çанталăк. Тавралăх.

**Чĕр чунсем - пирĕн туссем.** Ачасемпе чĕр чунсем хушшинчи хутшăну. Чĕр чунсене юратас, шеллес, хӳтĕлес туйăмсене çурата- кан хайлавсем.

**Ӳсен-тăран тĕнчинче.** Вăрман-çаран, чечек-курăк çинчен калакан хайлавсем.

**Вăрçă кĕрленĕ чух.** Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçин паттăрĕсем, тыл ĕçченĕсем, Аслă Çĕнтерӳ çинчен калакан хайлавсем.

**Халăх пултарулăхĕ.** Чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсем. Вĕсенче этем ăс-тăнĕн ырă енĕсем (ваттисене хисеплени, Тăван çĕр-шыва юратни, сăпайлăхпа ĕçченлĕхе ырлани, тĕрĕслĕхшĕн кĕрешни) палăрса тăни. Писательсем çырнă юмахсем, юптарусем, ытти халăхсен юмахĕсем, ваттисен сăмахĕсемпе туптарусем.

**Халăхăмăрăн сумлă çыравçисем.** Çеçпĕл Мишши, Митта Васлейĕ, П.Хусанкай, Я.Ухсай, Х.Уяр, А.Артемьев. Вĕсен уйрăм сăввисем, калавĕсем, пысăкрах хайлав сыпăкĕсем.

**Шурă юр çусассăн.** Хĕл вăхăтне сăнлакан хайлавсем. Вĕсенче тăван тавралăха, тăван çĕре юратни палăрни. Хĕл тата çур вăхăчĕ çинчен калакан туптарусем, ваттисен сăмахĕсем. Çĕнĕ çул тата Раштав уявĕсем.

**Вырăссен манăçми çыравçисем.** А.Пушкин, Н.Некрасов, С.Есенин, М.Пришвин, Н.Сладков, А.Куприн, В.Бианки çырнă хайлавсем.

